24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
ЯНВАРЬ
22
КĔÇНЕРНИКУН
18(6043) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Пусмăрлăха, юнлă реакцие каялла таврăма хăтланакан гитлеризма тĕп тăвар

Паянхи кун пирĕн халăх, хăйĕн историйĕнчи хура страницăсенчен пĕрине уçса пăхса, ĕлĕкхи кунçулăн йывăрлăхĕсем çинчен аса илет.

Вăтăр çичĕ çул каялла, 1905 çулти январĕн 22(9)-мĕшĕнче, çак кун Питĕрте пĕтĕм Россия çĕрне хумхатакан хăрушă ĕç пулса иртнĕ. Йывăр пурнăçпа тата выçăпа аптраса çитнĕ Питĕр рабочийĕсем çăмăллăх ыйтма патша патне кайнă.

«Эпир, Питĕр хулинчи рабочисем, пирĕн арăмсем, ачасем тата ватăлнă аттеаннесем, патша, сан патна чăнлăхпа хÿтлĕх шырама килтĕмĕр. Эпир чухăнланса çитрĕмĕр, пире пусмăрлаççĕ, вăй çитеймн ĕçсемпе аптратаççĕ, пирĕнтен мăшкăлласçĕ, пире çын вырăнне хумаççĕ... Эпир чăтрăмăр, анчах пире тата ытларах та ытларах чухăнлăх, правăсăрлăх тата тирпейсĕрлĕх авăрнелле тĕкеççĕ. Тÿсĕмлĕх виçи тулчĕ. Пирĕншĕн халь ĕнтĕ чи хăрушă самант, тÿсейми асапсене малалла та чăтса пурăнниччен вилни лайăхрах шутланмалли самант çитрĕ...» тесе çырнă Питĕр рабочийĕсем хăйсен петицийĕнче.

Çакăн пек пĕтĕм чунран-чĕререн хурланса çырнă сăмахсене «патша аттемĕр» йышăнмасăр хăварнĕ, вăл пире хĕрхенсе уллутсен, капиталистсен тата вĕсен чиновникĕсен тискер пусмăрлăхĕнчен хăтарĕ, пирĕн пурнăçа çăмăллатĕ, тесе шухăшланă вăл вăхăтра рабочисем. Анчах большевиксем: çакăн пек мирлĕ демонстрацине кайни рабочисене нимĕн те пама пултараймасть, хамăра кирлĕ ирĕклĕхпе правăсене эпир революциллĕ кĕрешÿ урлă çеç илме пултаратпăр, тесе асăрхаттарнине ун чухне нумайĕшĕ ĕненмен.

Рабочисем патша дворецĕ патне пĕтĕм çемьисемпе — арăмĕсемпе, ачисемпе, аппĕ-амăшĕсемпе пĕрле пуçтарăнса кайнă. Вăрман пек халăх ушкăнĕ, ал̆ă çинче патша сăнĕсене, турăшсене йăтса пырса, чиркÿ юррисем юрланă. Çав кун Питĕр урамĕсене 140 пин çын ытла тухнă пулнă.

Анчах та юнлă Николай патша рабочисене тăхлан пульăсемпе йышăнса илме хушнă. Патша войскисем пăшалсенчен пенипе çав кунхине Питĕрте пин çынна ытла вĕлернĕ, икĕ пин çынна ытла амантнă. Питĕр урамĕсем мирлĕ рабочисен юнĕпе исленнĕ. Çапла вара январĕн 22-мĕш кунĕ пирĕн халăхăн историйĕнче «юнлă вырсарникун» ятпе йышăнса юлнă. Çакăн пек пусмăрланă ĕлĕк патша влаçĕ пирĕн рабочисене, хресченсене тата ĕç интеллигенцине.

Ĕçсыннисене çакăн пек йывăр нушара тата сĕм тĕттĕмлĕхре тытса тăнă патша влаçне пирĕн халăх Ленин — Сталин партийĕ ертсе пынипе Октябрьти революцире çĕмĕрсе тăкрĕ. Унтанпа, пĕр чĕрĕк ĕмĕр хушши эпир патшасăр, халăха пусмăрлакан уллутсемпе капиталистсемсĕр пурăнса, хамăр пурнăçа хамăра кирлĕ пек, социализмлă йĕркепе çĕнетсе пытăмăр. Кивĕ Россия вырăнне нумай чĕлхеллĕ нацисене пĕрлештерсе тăракан çĕршыв — Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ туса хутăмăр. Сталинла Конституцине пурăнакан аслă Совет Союзĕнче пирĕн кашни ĕçсынни пысăк правăсемпе, нумай ирĕклĕхсемпе усă курса, чăн-чăн гражданин пулса тăрать. Пирĕн халыхи ĕçсынни ĕлĕкхи патша Российинче пулнă пусмăрлăхсене пĕлмест. Çынна çын, халăха халăх пусмăрлассине эпир тахçанах тĕппипех пĕтерсе хунă. Пирĕн социализмлă çĕршыв хуçалăх тĕлĕшпе тата культура енĕпе тунă çитĕнÿсем çавтери пысăк. Ку çитĕнÿсем пĕтĕм тĕнчешĕн паллă пулса тăчĕç. Çакăн пек ирĕклĕ те çутă пурнăçпа пурăннă чух ĕлĕкхи йывăр кунçула астусан, ирĕклĕхпе çăкăр ыйтнăшăнах патша влаçĕ вуншар, çĕршер, пиншер çынна персе е çакса вĕлернисене аса илсен, пирĕн халĕ чун çÿçенсе каять.

Анчах та этемлĕхĕн усал тăшманĕ — Германи фашизмĕ — çав иртнĕ чуралăх кунçулне пирĕн çĕршыва каялла таврăма тăрăшать. Фашизм совет стройне пĕтерсшĕн пĕтĕм вăйне хурса талпăнать, вăл эпир Октябрьти революцире çĕнсе илнĕ ирĕксемпе мĕнпур правăсене çĕре таптаса лартма шухăшлать, патша чухнехи пек тискер власть туса, пирĕн çине каллех чуралăх сăнчăрĕ хума ĕмĕтленет.

Сталин юлташ Октябрьти аслă революци 24 çул тултарнă кун тунă докладра, Германи фашизмĕ пирĕн çĕршыва мĕн тума шутлани çинчен асăннă чух, çапла каларĕ:

«Тĕрĕссипе илсен, гитлерла режим вăл царизм вăхăтĕнче Российăра пулнă реакциллĕ режимăн ÿкерчĕкĕ пулса тăрать. Паллă ĕнтĕ, патша режимĕ рабочисен прависене, интеллигенцин прависене тата халăхсен прависене таптанă пекех, гитлеровецсем те вăл правăсене çине тăрсах таптаççĕ...

Гитлерла парти вăл — демократиллĕ ирĕклĕхсене пĕтерекен, вăтам ĕмĕрсенчи реакцин тата черносотенла погромсен партийĕ пулса тăрать», терĕ.

Çапла, гитлерла Германи фашисчĕсен çак вăрçăри тĕллевĕ вăл — пире çĕнтерсе, пирĕн халăха Германи князĕсемпе баронĕсен аллине чуралăха парасси пулса тăрать. Германи фашисчĕсем çĕнтерес пулсан, вĕсем пирĕн çĕршывра каллех ĕлĕкхи пек чуралăхпа пусмăрлăх йĕркисене туса хурĕччĕç. Çакăнпа пĕрлех Германи фашизмĕ тăвакан тискер ĕçсем патша влаçĕ чухнехи пек çеç мар, вăтам ĕмĕрсенчи варварсемпе инквизиторсем тунă тискерлĕхсенчен те ирсĕртерех пулĕччĕç.

Хăйсем йышăнса илнĕ çĕршывсенче гитлерла Германи фашизмĕ этем тÿсейми хăрушă террор йĕркисем туса хурать. Çакна эпир нимĕç захватчикĕсем пуçпулса тăракан Польша, Бельги, Норвеги, Франци, Югослави тата ытти çĕршывсенче те, уйрăмăнах хамăр территорин нимĕçсем вăхăтлăха йышăнса илнĕ облаçĕсенче куратпăр. Оккупациленĕ çĕршывсенчи халăхсене нимĕç фашисчĕсем пĕр шеллемесĕр асаплантараççĕ: вĕсен пурлăхĕсене çаратаççĕ, хăйсен чуралăхĕпе килĕшмен çынсене вуншарăн, çĕршерĕн пере-пере вĕлереççĕ, тĕрмесенче выçăхтарса пĕтереççĕ, чĕрĕллех вутта пăрахса çунтараççĕ тата ытти те. Çапла вара гитлерла Германи фашизмĕ — пĕтĕм ĕçсыннисен чи тискер те ирсĕр палачĕ, этемлĕхĕн чи усал тăшманĕ пулса тăрать. Гитлерпа унăн шайкин пĕтĕм тĕллевĕ вăл — нимĕç мар халăхсене чуралăха кĕртесси.

Пирĕн совет халăхĕ — ирĕклĕхе юратакан халăх. Вăл хăйĕн пурнăçне хăйне кирлĕ пек хăех туса пырать. Гитлерла империалистсен пусмăрĕпе вăл ĕмĕрне те килĕшес çук.

Паянхи кун, «юнлă вырсарникун» урокĕсене аса илсе, кашни совет çынни нимĕç захватчикĕсене хирĕç виличчен çапăçма сăмах парĕ, фронта пулăшассишĕн хăйĕн пĕтĕм вăйне хурса, пурнăçа шеллемесĕр кĕрешсе пырĕ.

Комсомолецсем çуракине хатĕрленес ĕçре

ЕЛЧĔК. Районри комсомолецсемпе çамрăксем çуракине хатĕрленес енĕпе тăрăшса ĕçлеççĕ. Уйрăмăнах «Марс» тата «Красное знамя» колхозсенчи комсомолецсем лайăх ĕçленине палăртмалла. Кунти комсомолецсем хирте юр тытаççĕ, тислĕк турттараççĕ, вăрлăхсене сортлаççĕ, колхоз правленине пысăк пулăшу параççĕ. Ахальрен мар ĕнтĕ «Марс» колхоз çĕнĕ çул тĕлне хирe 1500 тонна тислĕк, 130 тонна торф кăларнă, 51 центнер кĕл тата 21 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă, 230 гектар çинче юр тытнă, 320 центнер вăрлăх сортланă. Кунсăр пуçне 40 сÿре, 6 культиватор тата 9 сеялка юсанă. «Красное знамя» колхозра 235 лав тислĕк кăларнă, 12 плуг, 2 сеялка тата сÿресене юсанă.

Ытти колхозсенчи комсомолецсем те çуракине хатĕрленес ĕçе хутшăннă. Комсомолецсем пулăшнипе «Путь Ленина» колхозра хире 1287 лав тислĕк кăларнă, 70 гектар çинче юр тытнă, 35 центнер кĕл, 5 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă, 18 плуг, 4 сеялка, 18 сÿре юсанă, 100 центнер вăрлăх сортланă. «Коммунист» колхозра 327 лав тислĕк, 9 центнер кĕл кăларнă, 120 центнер вăрлăх сортланă. Орденлă «Ново-Ищеряково» колхозра 10 гектар çинче юр тытнă, 100 лав тислĕк кăларнă, вăрлăхсене сортласа, плугсене юсаса çитернĕ. «Петровка» колхозра 225 лав тислĕк кăларнă, 20 гектар çинче юр тытнă. Чапаев ячĕпе тăракан колхозра та 20 гектар çинче юр тытнă, 200 лав тислĕк кăларнă.

Комсомолецсем ытти ĕçре те хастаррăн ĕçлеççĕ. «Ново-Чурино» колхозра 16 çулти комсомолецсем Алексей Уткинпа Николай Титов конюх пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем 10-шар лаша пăхаççĕ. Кашни кăçал 200-шер ĕçкунĕ ытла тунă. Дзержинский ячĕпе тăракан колхозри комсомолец Николай Осипов фермăра сурăх пăхнă çĕрте пример кăтартса ĕçлет. Çавăн пекех Михаил Семенов конюх пулса 8 лаша пăхать, хăйĕн ĕçне тĕплĕн тăвать. Вăл, çамрăк пулин те, кăçал 150 ĕçкунĕ ытла тунă.

Комсомолецсем агитаци ĕçне те лайăх йĕркеленĕ. «Красное знамя» колхозри комсомолецсем—пурте агитаторсем. Вĕсем агитаци ĕçне бригадăсенче, фермăсенче туса пыраççĕ. Уйрăмăнах кунта трахработница-комсомолка Максимова лайăх ĕçлет. Вăл кашни кунах халăх хушшинче. Дзержинский ячĕпе тăракан колхозри комсомолецсем те агитаци ĕçне начар мар йĕркеленĕ.

И. ПЕТРОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Январĕн 20-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Январĕн 20-мĕшĕнче пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене хĕвеланăç еннелле хĕссе пынă. Противник пысăк çухатусем тÿсет. Пирĕн чаçсем Можайск хулине йышăнса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

Январĕн 19-мĕшĕнче нимĕçсен 16 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 5 самолет пĕтнĕ.

* * *

Январĕн 19-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем нимĕçсенне 39 танк, 2 бронемашина, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 730 ытла автомашина, 12 оруди прислуги-мĕнĕлех, зенитнăй пулеметсен 6 точкине пĕтерсе тăкнă, чугунçул çинчи 2 эшелона вут тивертсе янă, 21 вагона аркатса тăкнă, противник пехотин 7 батальонне сапаласа ярса пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Алексеев юлташăн чаçĕ Осташево район центрне йышăнса илнĕ чухне тăшманăнне 15 танк, 101 автомашина, боеприпассен 2 складне тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Плесенское ялĕ патĕнче (Хĕвеланăç фрончĕ) пулса иртнĕ хаяр çапăçусенче Бобров юлташăн чаçĕ противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 500 çынна яхăн стройран кăларнă та çар пурлăхĕсене турттарса пыракан пысăк обоза тытса илнĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче кĕçĕн лейтенант Подрезов юлташăн подразделенийĕнчи боецсем тăшман войскисен батальонĕн контратакине ăнăçлăн сирсе янă. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 200 виллине яхăн выртса юлнă. Çак çапăçура М. Фомин красноармеец танксене хирĕç пемелли хăйĕн пăшалĕнчен персе нимĕçсен 2 танкне стройран кăларнă.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть нимĕçсене халăх пурăнакан пунктран çапса кăларса, тăшманăн 100 автомашинине, 9 орудине, горючи складне, продовольстви складне, пулеметсем, винтовкăсем, мотоциклсем тата ытти çар пурлăхĕсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Красноармеец Васильев юлташ окопра тăшманăн 15 салтакне асăрханă, вара окоп патне систермесĕр шуса пынă та вĕсем çине гранатăсем пăрахнă. Çапла 15 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

* * *

Мускав облаçĕн нимĕçсем тытса илнĕ районĕсенчен пĕринче кĕрешекен Ф. юлташăн партизанла отрячĕ гитлеровецсене хирĕç ăнăçлăн çапăçать. Кунта эпир отряд командирĕн дневникĕнчи хăшпĕр вырăнĕсене илсе пичетлетпĕр:

«Январĕн 6-мĕш. Çул çинче нимĕçсен груз турттарса пыракан икĕ лавне тĕл пултăмăр. Лавĕсене пĕтерсе тăкрăмăр. Пире хирĕç тăнă салтаксемпе офицерсене 5 çынна вĕлертĕмĕр.

Январĕн 8-мĕш. Противникăн телефон линине пăсрăмăр. Татах тепĕр икĕ лав пĕтерсе тăкрăмăр. Çав тытăçура нимĕçсен 5 салтакĕпе 2 офицерне вĕлертĕмĕр.

Январĕн 9-мĕш. Засадăра пытанса ларнă çĕртен нимĕçсен çул çинче хурал тăракан салтакĕсемпе офицерĕсене 6 çынна персе пăрахрăмăр.

Январĕн 11-мĕш. Тăшманăн 100 лавран тăракан обозĕ çине тапăнтăмăр. Автоматсемпе винтовкăсенчен персе 45 нимĕçе вĕлертĕмĕр. Боеприпассем турттарса пыракан 2 фургонне вут тивертсе ятăмăр.

Январĕн 12-мĕш. Çыхăну кабелĕн 2 сыпăкне татса илтĕмĕр. Тепĕр вырăнта çыхăну линине 600 метр тăршшĕ пăсса тухрăмăр. Нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 3 çынна вĕлертĕмĕр. Çул тăршшĕпе темиçе вырăна минăсем лартса тухрăмăр».

* * *

Нимĕçсен 402-мĕш велобатальонĕнчи 1-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ ефрейторĕ Фриц Грушне допросра батальон юлашки эрне хушшинче мĕнле çухатусем тунн çинчен çапла каласа панă:

«Вилнисем—55 çын, аманнисем—112 çын. Çавнашкалах тата тăм илсе стройран тухнисем те—112 çын. Кунсăр пуçне тĕрлĕ чирпе чирленĕ 120 салтака ытларах госпитальсене ăсатнă.

* * *

Нимĕçсен обер-ефрейторĕ Манс Юнганс патне Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне Курт Рем Хемницран (Германия) çакăн пек çыру янă: «Сирĕн унта пурнăç мар, вĕçĕмсĕр асап çеç. Пирĕн патăмăрта та çавнашкалах. Вилнисен çĕнĕ спискне илтĕмĕр. Вилнисем хушшинче Крут Гайкипа Фриц Миллер та пур. Пĕтĕмĕшпе илсе каласан, кунта тăван çĕршывра та ырă мар. Час-часах нимĕн çиме те çук».

* * *

Цейц сывăхĕнче (Германия) гитлерла бандитсем тыткăнри красноармеецсене хупнă бараксене вут тивертсе янă. Çунакан бараксенчен чупса тухакан çынсене ирсĕрсем пулеметсенчен пере-пере пăрахнă.

Январĕн 21-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Январĕн 21-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç активлă çапăçусем туса пынă.

* * *

Январĕн 19-мĕшĕнче Рокоссовский юлташăн боецĕсем (Хĕвеланăç фрончĕ) нимĕç оккупанчĕсенчен халăх пурăнакан 4 пункта ирĕке кăларнă тата тăшманăнне 11 танк, 24 автомашина, 2 тягач, мотоциклсем, велосипедсем, пулеметсем, вуншар ещĕк снарядсем, минăсем тата ытти трофейăсем тытса илнĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче Голубев юлташăн боецĕсем, противника хирĕç хаяррăн çапăçса, тăшманăнне 9 пулемет, 6 мотоцикл, 27.300 патрон, çар пурлăхĕсем турттарса пыракан 39 лав, япаласемпе продовольстви склачĕсем, оперативнăй паха документсем тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 330 çын вилнĕ.

* * *

Верея хулине йышăннă чухне Ефремов юлташăн боецĕсем, малтанласа шутланă тăрăх, нимĕçсенне 11 танк, 46 оруди, 87 пулемет, 24 миномет, 1.000 ытларах мина тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 3.000 ытла вилли выртса юлнă.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть, противникăн çирĕплетнĕ пункчĕ çине кĕтмен çĕртен çĕрле пырса тапăнса, çав пункта йышăнса илнĕ, нимĕçсенне 3 оруди, 15 пулемет, 15 миномет тытса илнĕ тата нимĕçсен 30 салтакĕпе 2 офицерне тыткăна илнĕ.

* * *

Разведчик-красноармеец Кашенко юлташ тĕл персе нимĕçсен танксене хирĕç пемелли орудин расчетне пĕтерсе тăкнă. Унтан орудие тăшмана хирĕç çавăрса, паттăр боец тăшман çине 40 снаряд кăларса янă. нимĕçсене пысăк сиен кÿнĕ.

* * *

Ленинград облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенче партизансем ăнăçлăн кĕрешеççĕ. П. юлташăн отрядĕнчи боецсем фронта каякан çул çинче засадăна пытанса ларнă та тăшманăн горючи турттарса пыракан 6 автомашинине пĕтерсе тăкнă тата колоннăна сыхласа пыракан 17 нимĕç салтакне вĕлернĕ. А. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ Т. хули çывăхĕнчи шоссе çинче нимĕçсен авиабомбăсемпе снарядсем турттарса пыракан пилĕк тоннăллă 3 машинине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен 215-мĕш артполкĕнчи 3-мĕш батарейĕнчен тыткăна лекнĕ унтер-офицер Бернгард Брокгауз çапла каласа панă: «Манăн салтаксене обмундировани валеçсе пама тĕл килчĕ. Искусственнăй çăмран çыхнă перчаткăсемпе чăлхапуçсем ăшă тытмаççĕ тата часах çĕтĕлсе каяççĕ. Ездовой тепĕр эрнерен мана: перчатка çĕтĕлсе юрăхсăра тухрĕ, тесе каларĕ. Ăшă обмундировани çук пирки манăн кашни кунах салтаксем ÿпкелешсе вăрçнине илтме тивет».

* * *

Гомель облаçĕнчи Чечерск районĕнчи халăха гитлерла бандитсем нимĕн хăвармиех çаратса пĕтернĕ. Çак районри ялсенчен мĕнпур апат-çимĕçе, выльăх-чĕрлĕхе, кĕпе-тумтире, пуç тутрисемпе ача-пăчасен атă-пушмакĕсем таранах, илсе тухса кайнă. Çуртсенчен нумайĕшĕсене çунтарса янă, çурт хуçисене персе пăрахнă. Юлашки кунсем хушшинче çеç Чечерскра нимĕçсем районри çĕрĕç пайĕн служащине Беляева, местечка совечĕн секретарьне Жулега тата Чечерскра пурăнакан çынна Дановича персе пăрахнă. Персе пăрахнисенчен нумайĕшĕсен виллисем çулсем çинчех выртаççĕ. Нимĕçсем вĕсене пытарма ирĕк памаççĕ.

* * *

Эссен хулинче (Германия) Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне кайма килĕшменшĕн нимĕçсен 13 салтакне персе пăрахнă.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

СТАЛИН ЮЛТАША

Хаклă Иосиф Виссарионович!

Шупашкар хулинчи партипе совет, профсоюзпа комсомол организацийĕсен Владимир Ильич Ленин вилнĕренпе 18 çул тултарнă ятпа пухăннă ларăвĕ Сире, Ленинăн ĕçне малалла гениллĕ туса пыракана, мĕнпур халăхсен аслă çулпуçне тата Хĕрлĕ Çарăн аслă полководецне большевикла хĕрÿллĕ салам ярать.

Аслă Ленинăн чĕри тапма чарăннăранпа тата Эсир, Сталин юлташ, Ленинăн çĕнтерÿллĕ ялавне хăвăрăн алла илсе çÿле çĕкленĕренпе вунсакăр çул иртрĕ. Вунсакăр çул хушши ĕнтĕ Эсир социализмлă тăван çĕршывăн халăхĕсене Ленин кăтартса панă çутă çул тăрăх телейлĕ малашлăхалла ертсе пыратăр. Вунсакăр çул хушши ĕнтĕ Эсир тÿррĕн ертсе пынипе Ленин пăлăртса хунă шухăшсем пурнăçа кĕрсе пыраççĕ.

Çав çулсем хушшинче пирĕн тăван çĕршыв палламалла мар улшăнчĕ. Совет Союзĕ малта пыракан социализмлă индустриллĕ тата малта пыракан социализмлă ялхуçалăхлĕ çĕршыв пулса тăчĕ. Ĕçсыннисен пурнăçĕ тĕпренех лайăхланса пуянланчĕ. Халăхсем хушшинчи туслăх ÿссе çирĕпленчĕ, формипе нациллĕ, содержанийĕпе социализмлă культура ÿссе чечекленчĕ.

Сталин юлташ, Эсир ертсе пынипе Совет государстви ÿссе тĕрекленсе пычĕ, Эсир тÿррĕн ертсе пынипе Сталинла виçĕ пятилеткăсен планĕсене эпир чаплăн пурнăçа кĕртнĕ, Эсир тÿррĕн ертсе пынипе пирĕн Хĕрлĕ Çарпа пирĕн Хĕрлĕ Флот тăшмансемшĕн хаяр та хăватлă вăйсем пулса тăчĕç.

Халĕ ĕнтĕ, йывăр испытанисен кунĕсенче, пирĕн таса совет çĕрне фашистсен атти таптанă кунсенче, совет халăхĕ кăкăрĕнче Ленинăн çуламлă чĕри тапакан аслă çыннăн—Сталин юлташăн ятне пĕтĕм чун-чĕререн юратса чыслать. 1918—20 çулсенче Советсен çамрăк республикишĕн чи хăрушă кунсем пулнă вăхăтра совет халăхне кĕрешĕве хавхалантарса пынă пекех, Эсир, Сталин юлташ, халĕ мĕнпур совет халăхĕн вăй-хăватне пĕр тĕллев патнелле—сĕмсĕр те ирсĕр тăшмана çапса аркатма ертсе каятăр. Сирĕн çирĕп те шанчăк кÿрекен сăмахăрсем, Ленинăн—Сталинăн геройла парти çулпуçĕн, Совет правительстви руководителĕн, тăван çĕршыври мĕнпур хĕçпăшаллă вăйсен верховный главнокомандующийĕн сăмахĕсем, пĕтĕм Совет çĕршывĕ тăрăх кĕрешĕве чĕнекен хăватлă сасă пулса янăраççĕ. Эсир чĕннипе Совет Союзĕ пĕрлĕхлĕ боевой лагерь пулса тăчĕ, вăл пирĕн çарпа тата флотпа пĕрле хамăрăн тăван çĕршыв чыслăхĕпе ирĕклĕхĕшĕн, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене пуçĕпех пĕтерсе тăкассишĕн ирĕклĕхлĕ аслă вăрçă туса пырать. Эсир чĕннипе, Сирĕн ята чĕрере тытса, паттăр совет воинĕсем тăшмана çапса аркатмалли атакăна каяççĕ, гитлерла вăрă-хурахсемпе мародерсене пĕтере-пĕтере тăкаççĕ, пирĕн тăван çĕр çинчен фашистла ирсĕрсене хăвалаççĕ. Эсир чĕннипе, Сирĕн ята чĕрере тытса, совет халăхĕ ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет, фронт валли ытларах та ытларах хĕçпăшал, боеприпассем, снаряжени тата продовольстви парать.

Аслă Ленинăн хăвачĕ, Сирĕн кĕрешĕве чĕнекен ăслă сăмахсем совет çыннисене фронтра та, тылра та паттăрла ĕçсем тума хавхалантараççĕ.

Хĕрлĕ Çар отечественнăй вăрçăн çапăçу уйхирĕсенче тунă çĕнтерÿсем пирĕн çĕршыври творчествăллă ĕçе çĕнĕ вăй парса хавхалантарса çĕклерĕç. Пирĕн республикăри ĕçсыннисем, мĕнпур Совет Союзĕнчи ĕçсыннисем пекех, Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнине татах та чаплăрах çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илсе палăртма хатĕрленеççĕ. Вĕсем хăйсем çине татах та пысăкрах обязательствăсем илеççĕ, социализмлă ăмăртăва хăватлăн сарса пыраççĕ, фронтовой бригадăсем организацилеççĕ, всевобуч пункчĕсенче çар ĕçне вĕренсе алла илеççĕ, Хĕрлĕ Çара пулăшас ĕçе татах та ытларах вăйлатаççĕ. Вĕсем хамăрăн тăван çĕршыва, хамăрăн чыслăхпа ирĕклĕхе юлашки юн тумламĕ юлмиччен хÿтĕлеме хурçă пек çирĕп те хатĕр тăраççĕ.

Тăван çĕршывпа пыракан çак аслă кĕрешÿре пире аслă Ленинăн çĕнтерÿллĕ ялавĕ çул кăтартса пырать.

Пире хамăрăн çĕнтерÿсен организаторĕ—пирĕн çулпуç тата учитель Сталин юлташ гениллĕ ертсе пыни хавхалантарать.

Пирĕн мухтавлă тăван çĕршыв, унăн ирĕклĕхĕ, унăн никама пăхăнманлăхĕ сывă пулчăр!

Ленинăн—Сталинăн геройла партийĕ сывă пултăр!

Ленина ĕмĕр-ĕмĕрех мухтав!

Пирĕн аслă та ăслă çулпуç, гениллĕ полководец Сталин юлташ сывă пултăр!

В. И. Ленин вилнине асăнса пулнă траурлă-чаплă лару

Ĕнер, большевиксен партийĕпе Совет государствине организациленĕ аслă В. И. Ленин вилни 18 çул тултарнă кун, Чăвашсен академиллĕ театрĕнче Шупашкар хулинчи парти, совет, профсоюз тата комсомол организацийĕсен траурлă-чаплă ларăвĕ пулса иртрĕ.

Траурлă-чаплă лару хисеплĕ президиума В. И. Ленин ĕçне малалла туса пыракан аслă çулпуçа Сталин юлташа тата унăн çывăх соратникĕсене—ЦК ВКП(б) Политбюро членĕсемпе кандидачĕсене тăвăллăн ала çупса суйларĕ.

Вунсакăр çул Ленинсăр, Сталин юлташ ертсе пынипе тунă çĕнтерÿсем çинчен ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Т. А. Ахазов юлташ доклад туса пачĕ. Ахазов юлташ хăйĕн докладĕнче пролетариллĕ революцин аслă генийĕ Владимир Ильич Ленин пурнăçĕпе ĕçĕсем, унăн вĕрентĕвĕн чаплă çĕнтерĕвĕсем çинчен, Сталин юлташ ертсе пынипе совет халăхĕ тунă пысăк çитĕнÿсем çинчен тата фашизмăн тискер бандисенчен Совет государствине сыхлас тĕлĕшпе Хĕрлĕ Çар мухтавлă çĕнтерÿсем туни çинчен тĕплĕн каласа пачĕ.

Траурлă-чаплă лару тăвăллăн ала çупса аслă Ленинăн чи шанчăклă соратникĕ, унăн ĕçне малалла туса пыракан Сталин юлташ патне саламлă çыру яма йышăнчĕ.

* * *

Лару хыççăн Чăвашсен академиллĕ театрĕн коллективĕ «Кремлевские куранты» ятлă пьесăна лартса пачĕ.

ВКП(б) Центральный Комитечĕпе СССР Совнаркомĕнче

ВКП(б) Центральный Комитечĕпе СССР Совнаркомĕ, ĕçсыннисем ыйтнине ырласа, В. И. Ленин вилни 18 çул тултарнă куна—1942 çулти январĕн 22-мĕшне—ĕçлемелли кун тума йышăннă.

Автозаводри комсомолецсемпе çамрăксен чĕнĕвĕ çине ответлесе

КАНАШ. Вагонсем юсакан цехри рабочисемпе служащисен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура Мускаври Сталин ячĕпе тăракан автозаводри комсомолецсемпе çамрăксен чĕнĕвне сÿтсе-яврĕç.

— Автозаводри çамрăксен пуçарăвĕ питех те кирлĕ пуçару. Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнине производствăра пысăк çитĕнÿсем туса фронта пулăшнипе паллă тăвар,—терĕç рабочисем. Вĕсем, Хĕрлĕ Çар уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, хăйсем çине çак обязательствăсене илчĕç:

Январь уйăхĕн малтанхи çурринче юса пынине пĕтерсе, февралĕн 23-мĕш тĕлне программăран иртерсе 10 вагон юсаса кăлармалла; кулленхи ĕç нормине пĕтĕм цехĕпе 150 процентран кая мар тултарса пымалла; кивĕ детальсемпе анлăн усă курса, туса кăларакан продукцин хăйне ларакан хакне 8—10 процент чухлĕ йÿнетмелле; февралĕн 23-мĕш тĕлне вагонсем юсас программăпа пуçласа панă спецзаказа срокчен пурнăçламалла.

Илнĕ обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçлассишĕн вагонсем юсакан цех коллективĕ Сталинла вахтăна тăчĕ тата вагонсем тăвакан цех коллективне социализмлă ăмăртăва чĕнчĕ.

Т. ИВАНОВ.

* * *

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Комсомолăн Аслă Чурачăкри «Заветы Ильича» колхоз суменчи организацийĕнчи комсомолецсем Сталин ячĕпе тăракан автозаводри çамрăксен чĕнĕвне сÿтсе-яврĕç. Вĕсем пуçарăвне ырларĕç, хăйсем çине обязательствăсем илчĕç. Колхоза çуракине хатĕрленме пулăшса, 100 гектар çинче юр тытма, 30 пăт кĕл, 5 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухма пулчĕç.

Халь комсомолецсем хăйсен обязательствисене пурнăçлас тĕлĕшпе хĕрсех ĕçлеççĕ. Январĕн 16-мĕшĕнче 6 çын тырă виçнĕ çĕрте ĕçлерĕç. Вĕсем 4 сехет хушшинче 2 кунхи нормăна тултарнă. Уйăта Арсентьев, Смирнова, Кирилина комсомолецсем хастарлăн ĕçлерĕç. Ялти комсомолецсемпе çамрăксем тырă сортланă çĕре активлăн хутшăнаççĕ.

В. ВИКТОРОВ.

Можайск хулине йышăнса илни

ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, январĕн 20-мĕш. (ТАСС). Паян Совет Информбюрорĕ пирĕн войсксем Можайск хулине йышăнса илни ҫинчен пĕлтерчĕ. Можайск патĕнчи событисем ҫакăн пек пулса пынă:

Пирĕн чаҫсем противника Дорохово сывăхĕнче вăйлăн пырса ҫапнă, ăна сывлăш ҫавăрма памасăрах Можайск патнелле хăвалама тытăннă. Можайск патне пымалли вырăнсене нимĕҫсем оборонăн вăйлă линийĕсемпе ҫавăрса ҫирĕплетнĕ. Пирĕн войсксем, Можайскран [illegible] маневр туса, нимĕҫсен оборонин ҫирĕплетнĕ линине татнă та Можайск патне пырса тухнă. Кунта пирĕн боецсен тăшман оборонин ҫĕнĕ, ҫавтери вăйлă рубежне тĕл пулнă, ку рубежа нимĕҫсем Можайскран [illegible] километр хĕвелтухăҫ еннерехе октябрь уйăхĕнчех туса хатĕрлесе пулнă. Можайск патĕнчи оборона ҫирĕплетнĕ линийĕ пĕр-пĕрин хушшине 50—100 метр хăварса шахматла йĕркепе туса тухнă пулемет дзочĕсен [illegible] речĕсенчен тăнă. Питĕ вăйлă ҫирĕплетнĕ дзотсем, стрелковăй окопсен тата [illegible] системипе пĕтĕҫсе, питĕ вăйлă сооружени пулса тăнă. Ҫав сооруженисем умне темиҫе йĕрке пралук картасем тытса лартнă. Кусăр пуҫне тата нимĕҫсем кунта [illegible] питĕ нумай минăсем лартса тухнă.

[illegible] пырса ҫапса, оборонăн ҫав ҫирĕплетнĕ линине ҫĕнтерсе илнĕ. Можайск патĕнче нимĕҫсем техника тĕлĕшпе те, [illegible] тĕлĕшпе те питĕ пысăк ҫухатусем тунă. [illegible] Германи [illegible] тĕрлĕ автомобильсем [illegible]

[illegible]

Хулара тăнă нимĕҫ войсксем кирек епле пулсан та Можайска памалла марри ҫинчен приказ илнĕ. Вĕсем хула тавралăхне пур ялсене те ҫирĕплетнĕ, хулан хĕвелтухăҫ патне [illegible] туса хатĕрленĕ. Можайск центрĕнчен тата [illegible] хĕвеланăҫ пайĕсенче противникăн пирĕн войсксен боевой йĕркисене ҫине минометсемпе питĕ вăйлă персе тăнă. Анчах апла пулин те совет пехотинецĕсем Можайскăн [illegible] енне ҫĕмĕрсе кĕрсе, вокзала тытса илнĕ. Нимĕҫсем темиҫе хутчен те тунă контратакисем ăнăҫлă пулман. Пĕр вăхăтрах [illegible] пирĕн тепĕр соединенин боецĕсем ҫĕмĕрсе кĕнĕ, [illegible] нимĕҫ автоматчикĕсене пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн чаҫсенчен пĕри хулана штурмланă. Кĕске те хаяр ҫапăҫу хыҫҫăн пирĕн боецсем Можайск хули ҫумĕнчи халăх пурăнакан Чертанов ятлă пункта йышăна илнĕ те [illegible] тăшман умне тухса тăнă.

Кĕҫĕн лейтенант Козинцев [illegible] боецсем, Можайск хулине [illegible]

[illegible] ВКП(б) [illegible] Хĕрлĕ ялав [illegible]

Можайск хулине йышăннă чухне пирĕн чаҫсем питĕ нумай трофейсем тытса илнĕ. Урамсенче пур ҫĕрте те нимĕҫсен пăрахса хăварнă грузовиксем, орудисем, пулеметсем тата ытти тĕрлĕ хĕҫпăшалсем йăваланса выртаҫҫĕ. Пирĕн чаҫсем тыткăна [illegible] 100 красноармеецсене ирĕке хăварнă.

Совет войскисем тăшмана Можайскран хĕвеланăҫ еннелле хăваласа пыраҫҫĕ.

600 метр çӳллĕшĕнчен парашютсăр сикни

Вăл шартлама сивĕ кун аэродром ҫинче пысăк хавхалану пулнă. Авиадесант чаҫĕнчи ҫамрăк боецсем чи пирвайхи хут парашютпа сикме хатĕрленнĕ.

Десантниксем пысăк сывлăш карапĕ ҫине вырнаҫса ларнă. Тăватă моторлă машина аэродром тавра пĕр хут вĕҫсе ҫаврăннă та вĕренӳ площадки ҫине ҫул тытнă. Штурман сигналĕ тăрăх боецсем пĕрин хыҫҫăн тепри сикме пуҫланă. Пĕлĕт тӳпи уҫăлнă парашют ҫаврашкисемпе тĕрленсе эрешленнĕ. Отделени командирне Черный юлташа хăйне те сикме черет ҫитнĕ.

Иван Черный — чаплă физкультурник. Ĕлĕк вăл Днепропетровскри Ленин ячĕпе тăракан заводра ĕҫленĕ. Унăн боевой опыт пур—десантлă чаҫпе икĕ хутчен фашистсен тылне анса унта тăшмана хирĕҫ паттăррăн ҫапăҫнă.

Сывлăш карапĕ 600 метр ҫӳллĕшĕнче пынă. Иван Черный нимĕн хумханмасăр-тумасăрах карап ҫинчен ҫĕрелле сикнĕ. Анчах та карапран уйрăлсанах йăнăшса вăл парашют ункине туртас вырăнне парашют ҫаккине туртнă. Ҫĕрелле ыткăнакан хăвăртлăх питĕ пысăк пулнă. Ҫĕр ҫине ҫитесси темиҫе секунда кăна тăрса юлнă.

Черный тата тепĕр хут парашют ункине туртса уҫма пикеннĕ. Парашют юсавлах пулнă, анчах ку хутра та унка туртса уҫас вырăнне парашют ҫаккине туртнă пирки, парашют уҫăлман. Укнĕ чухнехи хăвăртлăха кăшт та пулин вăрахлатас шутпа тата штопора лекес мар тесе, Черный юлташ аллисемпе кармашса пынă. Стихийăна хирĕҫ кĕрешме ăна хăйĕн калама ҫук ҫирĕп вăйĕ пулăшнă.

Акă — ҫĕр. Черный метр ҫурă тарăнăш юрт ăшне урипе лапăлатса ӳкнĕ. Ҫĕр ҫине ҫитсе ҫапăннипе унăн пĕтĕм кĕлетки кисреннĕ, анчах нимĕнле суран та пулман. Тухтăрсем, сăнаса пăхнă хыҫҫăн Черный юлташăн паттăрла сывлăхĕ нимĕн чухлĕ те сиенленменнине палăртнă.

Черный юлташ парашюта уҫмасăрах 600 метр ҫӳллĕшĕнчен ҫĕре сикни — авиаци историйĕнче пĕррремĕш хут пулнă ĕҫ пулса тăрать.

(«Красная Звезда» хаҫатран).

Йĕлтĕрҫĕсен кросне хатĕрленетпĕр

СĔНТĔР. Хĕрлĕ Ҫар 24 ҫул тултарнă ятпа пулса иртекен йĕлтĕрлĕ кроса хатĕрленес тĕлĕшпе комсомолецсемпе профсоюз членĕсен сывлăхĕсене тĕрĕслесе, отделенисем, взводсем, ротăсем тăвас ĕҫ пырать. Малтанлăха шута илнĕ тăрăх, районра 61 отделени, 20 взвод, 4 рота организациленĕ.

Комсомолăн НКВД ҫумĕнчи организацийĕ (комсорг Фролов юлташ) кроса аван хатĕрленет. Кунта занятисем хыҫҫăн тренировкăсем туса ирттереҫҫĕ. Тренировкăсенче Соколов, Чернов, Фролов юлташсем пахá тĕслĕхсем кăтартаҫҫĕ.

Ҫавăн пекех комсомолăн Мăн Сĕнтĕр вăтам шкулĕнчи комитечĕпе профсоюз организацийĕ те ку ĕҫе аван туса пыраҫҫĕ. Кунта темиҫе хутчен те йĕлтĕрлĕ походсем туса ирттернĕ. Ювалово вăтам шкулĕнче те кулленех тренировкăсем пулаҫҫĕ. Кроса хатĕрленес тĕлĕшпе комсомол комитечĕн секретарĕ С. Ятрушева юлташ аван ĕҫлет.

Анчах кроса пур ҫĕрте те кирлĕ пек хатĕрленеҫҫĕ теме ҫук-ха. Комсомолăн райпотребсоюз ҫумĕнчи организацийĕ (секретарĕ Викторова юлташ) нимĕн те тумасть. Ҫавăн пекех Юмăри туллимар вăтам шкулĕнчи (секретарĕ Семенова), Пушкăртри туллимар вăтам шкулти (секретарĕ Зиновьева юлташ), Уполнаркомзаг ҫумĕнчи (секретарĕ А. Бугрова юлташ) пуҫламĕш организацисенче те кроса хатĕрленесси питĕ япăх пырать. Профсоюзăн шкулсенчи организацийĕсем кроса хатĕрленес ĕҫе йăлтах комсомол организацийĕсем ҫине йăвантарнă. Ку ҫитменлĕхе пĕтермелле.

С. НАЛИМОВ.

* * *

ШĂХАСАН. Комсомолăн, профсоюзсен тата Осоавиахимăн районри организацийĕсем Хĕрлĕ Ҫар 24 ҫул тултарнă ятпа пулса иртекен йĕлтĕрҫĕсен кросне хатĕрленеҫҫĕ.

Йĕлтĕрҫĕсем тренировкăсем туса ирттереҫҫĕ. Ку тĕлĕшпе районра 24 инструктор-тренер ĕҫлет.

Районра йĕлтĕрсем ҫителĕклĕ тарап тăвас шутпа, Калинински обозо-ремонтнăй мастерской ятарласах пĕр пин мăшăр йĕлтĕр туса хатĕрлеме обязательство илнĕ. Паянхи куна мастерской 267 мăшăр йĕлтĕр туса хатĕрленĕ. Йĕлтĕрсене организацисене валеҫсе панă. Кусемсĕр пуҫне, йĕлтĕрҫĕсем — кросс участникĕсем хăйсем 467 мăшăр йĕлтĕр тунă, 146 мăшăр йĕлтĕр илсе хатĕрленĕ. Районĕнче пурĕ 815 мăшăр йĕлтĕр пур.

Чылай ҫĕрте — Шуркассинче, Шăхасанта, Ямашра, Ăвăспӳрт Кипечре тренировкăллă походсем туса ирттернĕ. Походсене 501 ҫынна явăҫтарнă. Йĕлтĕрҫĕсен сывлăхне тĕрĕслес майпа 12 вырăнта медицина пункчĕсем ĕҫлеҫҫĕ. Халĕ 470 йĕлтĕрҫĕн сывлăхне тĕрĕсленĕ.

Тренировкăсене лайăхрах йĕркелесе ирттерес тĕлĕшпе, йĕлтĕрҫĕсенчен 78 отделени, 23 взвод организациленĕ. Вĕсенче 684 ҫын тăрать. Хĕрачасенчен уйрăммăн 28 отделени тунă. Унта хальхи вăхăтра 164 хĕрача кашни кунах тренировкăсене ҫӳреҫҫĕ. Малтанлăха палăртнă тăрăх, кросра 2100 ҫын, вăл шутран 980 комсомолец пулмалла.

Кроса хатĕрленес тĕлĕшпе тренер-инструкторсем: М. Моисеев, М. Григорьев, Алексеев, Васильев юлташсем аван ĕҫлеҫҫĕ. Моисеев юлташ нумаях пулмасть Шăхасан—Ăвăспӳрт Кипеч маршрутпа 50 километрлă поход туса ирттерчĕ.

С. ШАДИН.

Рейхенау фельдмаршалăн вилĕмĕ ҫинчен Англире мĕн ҫыраҫҫĕ

ЛОНДОН, январĕн 20-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи пичетне Рейхенау фельдмаршалăн вилĕмĕ икĕ енчен интереслентерет: пĕрри—ҫак вилĕм ҫинчен яланхи пек мар, пачах урăхла пĕлтерни, тепри—Рейхенауна мĕнле вилĕм ҫырса ҫапни. Рейхенау вилĕмĕ ҫинчен пĕртен-пĕр кĕске пĕлтерӳ пулнă. Унта ҫапла каланă: «Рейхенау ăна Германипе Совет Союзĕ хушшинчи вăрҫă фронтĕнчен, чирлесе ӳкнĕ пирки, Германие илсе пынă чухне ҫул ҫинче апоплекси чирĕ ҫапнипе вилсе кайнă, тенĕ. Ҫак вăрҫăра Рейхенау мĕнпе палла пулса тăни ҫинчен те, вăл мĕнле пысăк ĕҫсем туса хăварни ҫинчен те, е урăх биографиллĕ даннăйсем ҫинчен те, ҫавăн пек чухне яланах пĕлтернĕ пек, халĕ ним те ҫырса пĕлтермен. Ҫавăн пирки Рейхенау фельдмаршал мĕнле вилсе кайни ҫинчен тĕрлĕ хыпарсем ҫуралаҫҫĕ.

Рейхенау вилĕмĕ ҫинчен мĕн те пулин пĕлме хура чатăр хупласа тăрать. Мĕн вăрҫă пуҫланнăранпах Германи ҫарĕсен верховнăй главнокомандующийĕ пулнă фельдмаршал ҫапла пĕтнине шута илсен, Рейхенау вилĕмĕ татăх та ытларах тĕлĕнтерет. Пичет ҫакна асăнса илет: Францие ҫĕнтерсен, Гитлер 12 фельдмаршал туса хунă, ҫав хисепрен 6 фельдмаршала вырăнтан кăларнă та ĕнтĕ, халĕ ҫиччĕмĕшĕ—Рейхенау вилсе кайнă. Браухича та СССР-па Германи хушшинчи вăрҫă фронтĕнчи должноҫĕнчен кăларнă тата 1941 ҫулти декабрьте фон-Бок маршала центральнăй фронтри ĕҫсенчен сирсе янă. Фон-Клейст генерала та, каланă тăрăх, айăпа кĕнĕ пирки фронтран чĕнсе илнĕ. Рейхенау вилĕмĕ, Польшăна хирĕҫ вăрҫă пуҫласа ярса, генерал фон-Фритч темĕнле ăнсăртран вилсе кайнине аступтарать.

«Сэндей экспресс» хаҫат: Рейхенау вилĕмĕ Германин верховнăй командованийĕн кризисĕпе ҫыхăнса тăрать,—тесе ҫырать.

Лондонри радио-комментатор Монтегю хăйĕн вăрҫă обзорĕнче ҫапла каланă: Рейхенау вилĕмĕ нимĕҫ генералĕсене те, ҫавăн пекех нимĕҫ халăхне те шухăша ярать,—тенĕ.

Лондонри тепĕр радио-обзорта ҫапла каланă: «Рейхенау темле чир пырса ҫапнипе вилсе кайнă. Курăнсах тăрать: чир ăна пит те тĕл пырса ҫапнă вара, мĕншĕн тесен Рейхенау мĕнпур нимĕҫ генералĕсенчен пуринчен те сывлăхлăраххи, тӳсĕмлĕреххи пулнă».

Браухич паллă мар чирпе чирлесе ӳкни

ЖЕНЕВА, январĕн 20-мĕш. (ТАСС). Германин информаци бюровĕ ҫапла пĕлтерет: юлашки вăхăтра Браухич чĕри тĕрĕс ĕҫлеменнипе хытă асапланнă, ҫавăнпа ăна операци тумалла пулнă. Пĕлтерӳре каланă тăрăх, операци лайăх пулса иртнĕ, анчах ҫапах та Браухичăн сывалса ҫитме нумай вăхăт кирлĕ пулать. Выранти журналистсем Браухичăн йывăр чирĕ ҫинчен пĕлтернипе питĕ интересленме пуҫланă. Кунта ҫакна палăртаҫҫĕ: Рейхенау генерал вилни ҫинчен калакан пĕлтерĕве Браухич чирлесе ӳкни ҫинчен калакан пĕлтерӳпе пĕрлех пичетлесе кăларнă. Браухич чирĕ ҫинчен калакан официальнăй пĕлтерĕве вырăнтан кăларнă. Браухич ăҫта пурăнни паллă мар пирки чылай генералсем шикленсе ӳкнине мĕнле те пулин лăплантарас шухăшпа ҫырни курăнса тăрать.

Совет партизанĕсем гитлеровецсене шиклентереҫҫĕ

СТОКГОЛЬМ, январĕн 19-мĕш. (ТАСС). Скандинаври телеграф агентствин бюровĕ ҫапла пĕлтерет: Германин ҫар корреспонденчĕсем пĕлтернĕ тăрăх, совет партизанĕсем нимĕҫсене пысăк ҫухатусем кӳреҫҫĕ. Партизансене хирĕҫ мĕнпур вăйсене мобилизациленҫҫĕ. Партизансене хирĕҫ кĕрешме нимĕҫсем ятарласа чаҫсем тунă. Ҫĕрле ҫӳрекен партизансене хирĕҫ нимĕҫ салтакĕсен ҫапăҫма питех те йывăр. Партизансем йывăр пулеметсемпе, гранатăсемпе, винтовка-глушительсемпе тата ытти хĕҫпăшалланнă. Вĕсен вăрмансенче т. ыт. шăплăх вырăнсенче базăсем пур.

Малалла агентство ҫакна палăртать: гитлеровецсен партизансене хирĕҫ кĕрешме артиллерипе танксен тата авиацин пысăк чаҫĕсенех яма лекет. Кунсăр пуҫне, партизансенчен хăракан гитлеровецсен ҫулсене, кĕперсене, складсене, электростанцисене тата ытти хисене те пысăк вăйсемпе хуралламa лекет.

Болгарири госпитальсем тăм илсе янă нимĕҫ салтакĕсемпе тулса ларнă

АНКАРА, январĕн 20-мĕш. (ТАСС). Болгарирен таврăннă ҫын ҫапла каласа парать: Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрҫă фронтĕнчен Болгарири госпитальсене илсе пынă нимĕҫ салтакĕсен хисепĕ 150.000 ҫынран та ытла шутланать. Вĕсене пурне те тăм илсе янă. Ҫав ҫын каланă тăрăх, пĕр Шумла хулинче кăна тăм илтерсе янă нимĕҫсем 25.000 ҫын шутланаҫҫĕ. Ҫав хулари киногеатртан, мĕнпур шкулсенчен тата ытти пысăк ҫуртсенчен тунă госпитальсене кашни кунах нимĕҫсен аманса пĕтнĕ тата тăм илтерсе янă салтакĕсене илсе пыраҫҫĕ.

Гитлеровецсем советăн тыткăна лекнĕ воинĕсене персе вĕлереҫҫĕ

СТОКГОЛЬМ, январĕн 20-мĕш. (ТАСС). Нимĕҫсем советăн тыткăна лекнĕ воинĕсене пере-пере вĕлернине Норвеги ҫыннисем пĕрре ҫеҫ мар курнă. Ҫапла, Тронхейм ҫывăхĕнчи Эрланд утравĕ ҫинче нимĕҫ хуралҫи советăн тыткăна лекнĕ виҫĕ воинне ҫавăнтах персе вĕлернĕ, мĕншĕн тесен вĕсем кабель хунă ҫĕр айĕнчи канавăна кĕме хушнине итлемен. Ҫавăнтах тепĕр икĕ вырăс ҫыннине, вĕсем хушнă ĕҫе туман тесе сăлтав тупса, персе пăрахнă. Советсен тыткăна лекнĕ ҫыннисене «кирлĕ пек ĕҫлемеҫҫĕ» тесе яланах хĕнеҫҫĕ. Норвеги ҫыннисем вырăссене пулăшса тăрсан, вĕсене хăйсене те тем тĕрлĕ асап кăтартаҫҫĕ.

Гитлеровецсем Габриэль Перипе Люсьен Сампена персе пăрахни

Франци халăхĕн шанчăклă икĕ ывăлĕн ҫирĕплĕхĕпе паттăрлăхĕ

ЖЕНЕВА, январĕн 19-мĕш. (ТАСС). Парижран ҫапла пĕлтереҫҫĕ: Франципе патриотла движенипе Германие хирĕҫле саботаж ҫав тери вăйлăн ӳссе пынă пирки нимĕҫсен оккупациллĕ влаҫĕсем Франци халăхĕн чи лайăх ҫыннисене хирĕҫ массăллă террор туса пыраҫҫĕ.

Иртнĕ ҫулăн декабрь уйăхĕнче нимĕҫсем Францин темиҫе патриотне персе пăрахнă. Кун хыҫҫăн: вĕсем заложниксем пулса тăраҫҫĕ, ҫавăнпа та Германие хирĕҫле саботажсем ӳссе пынă пирки вĕсене персе пăрахатпăр, тесе пĕлтернĕ.

Персе пăрахнисем хушшинче Франци коммунистсен партин тата рабочисен движенин паллă деятелĕсем — Габриэль Перипе Люсьен Сампе пулнă. Шанчăклă сведенисем тăрăх, Габриэль Перие персе пăрахас умĕн нимĕҫсем ăна Германие хирĕҫ кĕрешме чарăнасси ҫинчен килĕшӳ тутарттарма пур майсемпе те хăтланса пăхнă. Ҫакна тăвас тесе вĕсем Габриэль Пери патне провокаторсен ушкăнĕсене янă, ăна «хăйсем майлă ҫавăрма» темĕн те хăтланса пăхнă. Хăйсен ĕмĕчĕсем нимпе те пурнăҫа кĕменнине тавҫăрса илсен, нимĕҫсем Габриэль Перие ҫав тери тискеррĕн асаплантарнă. Анчах ҫапах та вĕсен Франци халăхĕн шанчăклă ывăлĕн паттăрлăхĕпе ҫирĕплĕхне хавшатма май килмен. Декабрĕн 15-мĕшĕнче Габриэль Перие Мон-Валерьен крепоҫĕнче персе пăрахнă.

Гитлеровецсем персе пăрахнă Люсьен Сампе те хăйĕн пурнăҫĕн юлашки самантне ҫитичченех ҫавăн пекех ҫирĕп те паттăр пулнă.

Франци патриочĕсем хушшинче Габриэль Пери вилес умĕн ҫырса хăварнă ҫыру питĕ анлă сарăлса пырать.

«Эпĕ хамăн пурнăҫăн идеалне мĕн виличченех тĕрĕс тытса пынине пирĕн туссем пĕлччĕр, — тенĕ ҫав ҫырура. — Эпĕ Францие пурăнмалла тăвасси шĕн вилнине манăн тăван ҫĕршыври ҫынсем шĕлсе тăччăр».

Китайпа Япони хушшинчи вăрҫă

Хунань провинцин ҫурҫĕр пайĕнче Китай войскисемпе Япони войскисем хушшинчи ҫапăҫусем Синцзянь юханшывĕн тăрăхĕнче пыраҫҫĕ. Японин чакса пыракан войскисен тĕп пайĕсем ҫак шывăн ҫурҫĕр хĕррине каҫса кайнă. Китай войскисем халĕ, пĕтĕмĕшпе илсен, декабрь уйăхĕ вĕҫĕнче Японцы Чанша ҫине наступлени тума пуҫличчен пулнă положение йăлтах каялла таврăнă.

Хубэй провинцинче ҫапăҫусем Суйсянь хули районĕнче пыраҫҫĕ. Китаецсем Япони войскисен позицийĕсене атакăлаҫҫĕ. (ТАСС)

Хĕрлĕ Ҫар боецĕсем валли ăшă тумтирсем

ҪĔРПУ. Хĕрлĕ Ҫар боецĕсем валли хĕлле тăхăнмалли ăшă тумтирсем пухас ĕҫ районра анлăн сарăлчĕ. 1941 ҫулта ĕҫҫыннисем пĕтĕмпе 2425 тир, 65 мăшăр ҫăматă, 127 ҫĕлĕк, 988 мăшăр алшăш, 616 мăшăр носки, 650 мăшăр портянка, 159 фуфайка, 146 шалавар, 170 мăшăр кĕпе-йĕм, 508 алшăлли пухса панă.

Пухнă тирсенчен районри профтехшкулта 208 кĕрĕк пиншак, 81 жилет, 150 мăшăр алсатулĕ ҫĕлеттернĕ. Старак тата Тĕнсĕр ялĕсенчи колхозниксем пухнă ҫăмран 543 мăшăр ҫăматă йăвалаттарнă. Пухнă ăшă тумтирсене районри комисси Хĕрлĕ Ҫар боецĕсем патне ярса панă.

Ăшă тумтирсем пухас ĕҫ малалла та сарăлса пырать. Январь уйăхне кĕнĕренпе районри комисси складне 47 тир, 23 килограмм ҫăм, 35 ҫĕлĕк, 4 мăшăр ҫăматă, 31 мăшăр носки, 19 мăшăр ҫăм перчатка леҫсе панă.

Хĕрлĕ Ҫар боецĕсене ăшă тумтирсем парса пулăшас ĕҫ татах та анлăн пулса пымалла. Анчах вырăнти совет органĕсем ҫак ĕҫе кирлĕ таран тăрăшса тумаҫҫĕ. Районри комиссирен хăшпĕр ҫынсем кайнă пулсан, вĕсен вырăнне халĕ никама та суйламан, складра ĕҫлекенсем те ҫук.

Г. ПЕТРОВ.

* * *

ИШЛЕИ. Районра Хĕрлĕ Ҫар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕҫ анлăн сарăлса пырать. Январĕн 1-мĕш тĕлне районĕпе 2.985 тир, 91 кĕрĕк пиншак, 364 ҫĕлĕк, 263 мăшăр алшăш, 506 мăшăр ҫăматă, 102 мăшăр носки, 23.972 метр пир, 565 алшăлли, 1.397 килограмм ҫăм, 37 мăшăр ăшă кĕпе, 271 аялтан тăхăнмалли кĕпе-йĕм, 10 фуфайка, 12 простыня, 112 минтер пичĕ, 3 джемпер, 2 шлем, 2 салфетка, 8 сăмса тутри т. ыт. те пухнă.

Районри ĕҫҫыннисем ку ĕҫ ҫине тимлĕн пăхаҫҫĕ. Тĕслĕхрен, ВăрманьСĕктер ялсоветĕнчи «Красная нива» колхоз членĕсем 25 тир, 3,8 килограмм ҫăм, 18 метр пир панă.

Салабай ялсоветĕ 109 тир, 14 ҫĕлĕк, 221 килограмм ҫăм, 97 метр ытларах пир, 55 алшăлли, 3 мăшăр перчатка, аялтан тăхăнмалли 10 кĕпе-йĕм, 3 минтер пичĕ пухса панă.

Районри ытти ĕҫҫыннисем хушшинче те Хĕрлĕ Ҫар боецĕсене пулăшас ĕҫ вăйланса пырать.

З. МИТРОФАНОВА.

Государствăна тырă сутаҫҫĕ

КАЛИНИНО. Ҫак кунсенче район центрĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз членĕсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура отечественнăй вăрҫă фрончĕсенче Хĕрлĕ Ҫар нимĕҫ фашисчĕсен ҫарне вăйлăн ҫĕмĕрсе пыни ҫинчен каласа панипе пĕрлех государствăна кооператив урлă тырă сутас ыйтăва та сӳтсе-яврĕҫ.

— Сталин юлташ пире, колхозниксене, Хĕрлĕ Ҫарпа Тинĕс-Ҫар Флотне куллен ĕҫлĕн пулăшса пыма, ытларах тырă, аш-какай, сĕт-ҫу, чĕртавар пама чĕнчĕ. Хамăрăн ытлашши тырăсене государствăна сутса ҫĕршывăн апатҫимĕҫ фондне вăйлатар, ҫакă вăл тăшмана пĕтерсе тăкас ĕҫре Хĕрлĕ Ҫара вăйлăн пулăшни пулать,—терĕ колхоз председателĕ В. Максимов юлташ. Вăл хăйĕн хуҫалăхĕнчен государствăна пĕр центнер тĕштырă сутма сăмах парса, ыттисене те чĕнчĕ. Пухури колхозниксемпе колхозницăсем, пурте пĕр шухăш-кăмăллă пулса, хăйсен ытлашши тыррине государствăна сутма йышăнчĕҫ. Колхоз счетоводĕ А. Иванов 32 килограмм, колхозник Ф. Павлов—20 килограмм, Г. Павлов—25 килограмм тата ытти колхозниксем те хăйсен хуҫалăхĕнчен государствăна тырă сутма пулчĕҫ. Колхозниксем колхозăн пĕрлешӳллĕ фондĕнчен государствăна 150 центнер тырă сутма палăртрĕҫ.

М. МИХАЙЛОВ.

* * *

Калинински районри Сăкăт ялсоветне кĕрекен колхозсем государствăна кооператив урлă тырă сутаҫҫĕ. Буденнăй ячĕпе тăракан колхоз государствăна 140 центнер тĕштырă сутрĕ. Сĕньял-Явăшри колхоз—70 центнер тырă сутрĕ.

Н. ГРИБОВ.

* * *

СОВЕТСКОЕ. Районри «Страж революции», «Коминтерн», «Сатурн», «Новый путь» колхозсен членĕсем государствăна 50 центнер тĕштырă сутрĕҫ. Ку ĕҫ ытти колхозсенче те анлăн сарăлса пырать.

Асламасри колхоз государствăна 50 центнера яхăн тырă сутрĕ. Колхозник И. Григорьев 7 пăт сутрĕ. Ҫавăн пекех «Красное Хочашево» колхоз членĕсем те хăйсен ытлашши тыррисене государствăна сутаҫҫĕ. Самарин, Макаров, Малов, Калашников тата ытти колхозниксем государствăна 80—100-шер килограмм тырă сутаҫҫĕ.

Е. ИВАНОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Управление кинофикации при СНК Чувашской АССР

производит набор курсантов на Казанские курсы механиков звукового кино.

На курсы принимаются лица обоего пола в возрасте не моложе 16 лет, с образованием не ниже 7 классов.

К ЗАЯВЛЕНИЮ СЛЕДУЕТ ПРИЛОЖИТЬ ДОКУМЕНТЫ:

1) свидетельство об образовании,
2) свидетельство о рождении,
3) свидетельство о здоровье,
4) справки о служебном стаже и с последнего места работы,
5) командировочное удостоверение от межрайонного отдела кинофикации,
6) две фотокарточки,
7) автобиографию,
8) паспорт и воинский билет предъявляются лично при явке на курсы.

Срок обучения на курсах 3—4 месяца, начало занятий 20 января с. г.

Лица, принятые на курсы, обеспечиваются стипендией и общежитием.

Все лица, поступающие на курсы, подвергаются приемным испытаниям в объеме семилетки: по математике, физике, русскому языку и Конституции СССР.

Заявления с документами направлять по адресу: гор. Чебоксары, ул. Ленина, дом № 21, Управлению Кинофикации при СНК Чувашской АССР. Для справок телефон № 3-95.

2—2 Управление Кинофикации при СНК Чувашской АССР.

Для заключения страхования вызывайте на дом страхового инспектора или агента рай(гор)финотдела.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăҫ пайĕн — 7—97 ялхуҫалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—83, ҫырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин ҫулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 631 Типография №1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 2, Ф. 6. 59 ½ 84 п. л.